Пирӗн енчи чӑвашсем малашлӑха пӗлес тесе ҫӗрӗсемпе юмӑҫ пӑхнине «Нартукан яни» тенӗ. Нартукан яракан вӑхӑт Раштав ыран тенӗ каҫран /кӑрлачӑн 6-мӗшӗнчен/ пуҫласа кӑрлачӑн 19-мӗшчен /Крещениччен/ пынӑ. Ҫак кунсемех аппаланчӑк вӑхӑчӗ те пулнӑ. Аппаланчӑк пулакансем хуҫисем ирӗк парсан килрен киле кӗрсе юрласа-ташласа ҫӳренӗ, хӑйсене паллаттармасса кӗрӗксем тавӑрса тӑхӑннӑ, сӳсрен, сурӑх-качака тирӗнчен мӑйӑх-сухал тунӑ, арҫынсем хӗрарӑмла, хӗрарӑмсем арҫынла тӑхӑннӑ тата ыт.те. Аппаланчӑксем усал-тӗселе хӑваласа илсе тухса каяҫҫӗ тенӗ, Крещени кунӗ вара ҫав усалсенчен тасалма вакра шыва кӗмелле пулнӑ. Каярахпа Нартукана кӗркуннерен пуҫласах яра пуҫланӑ, халӗ вара Нартукан йӗркине тӗпӗ-йӗрӗпе пӗлекен те сахал.

Халӑх йӑли-йӗрки

# Нартукан юррисем

Нартукана хӗрсемпе каччӑсем янӑ, аслисем те хутшӑннӑ. Нартукан яракан тӗп вырӑн хутса ӑшӑтнӑ мунча пулнӑ, пурӑнакан пӗр-пӗр пӳртпе те усӑ куркаланӑ. Каҫпа палӑртнӑ вырӑнта ҫамрӑксем пуҫтарӑнсан икӗ хӗрпе икӗ каччӑ ҫырмана анса вакран витрепе шыв илсе килнӗ. Кашни хӑйӗн ҫӗррине паллӑ туса ҫав витрене янӑ. Пӗр хӗре ҫӗрӗ ҫавӑраканни тунӑ та Нартукан пуҫласа хӗрсем виҫӗ юрӑ юрланӑ.



В. АЛЕКСЕЕВ ӳкерчӗкӗ.

*1. Шӗлкӗр кӑна шӗлкӗр, ай,*
*шӗлкеми*
*Пасарсерен мерчен суйлать-ҫке.*
*Ай-хӑях та пуҫӑм, ҫамрӑк чунӑм,*
*Куллен ырлӑх-сывлӑх кӗтет-ҫке.*
*2. Силлӗм кӑна силлӗм, ай,*
*сил пуҫӗ,*
*Ырӑ учӗ пулӗ, ай, ҫул пуҫӗ.*
*Турӑах та ҫырсан, пӳлӗх пӳрсен*
*Эпӗрех те пулӑпӑр ҫурт пуҫӗ.*
*3. Тӳп-тӳп кӑна тӳп-тӳп, ай, ут ури,*
*Йӗс тупка-тӑр унӑн чӗрнисем.*
*Ашшӗпелен амӑш ҫуртне*
*тытаканӑн*
*Ут пуҫ пек-тӗр унӑн чӗрисем.*

Кашни юрӑ хыҫҫӑн ҫӗрӗ ҫавӑраканни шывран пӳрнисене лекнӗ пӗр ҫӗрре кӑларнӑ, ҫӗрӗ мӗнле юрӑпа тухнинчен унӑн хуҫи хӑйӗн малашлӑхӗ мӗнле пуласси пӗлнӗ. Пӗрре тухнӑ ҫӗрре ытти ҫывӑх ҫыннисемшӗн тесе каллех витрене янӑ. Нартукан яма чарӑнас умӗн ҫӗрӗсене каялла ямасӑр пур ҫӗрӗсем те тухса пӗтиччен юрланӑ. Юлашкинчен ҫӗррисене пурте витрери шыва янӑ, шывне мунчаран тухса ҫул ҫине тӑсса тӑкнӑ. Камӑн ҫӗрри маларах тухса ӳкнӗ, ҫавӑ маларах качча каять /авланать/ тенӗ.

Нартукан юррисем йышлӑ пулнӑ, унсӑр пуҫне Нартукан янӑ чухне ӗҫкӗ, салтак, уяв юррисене те юрланӑ, виҫӗ кӗвӗпе /пирӗн сӑвӑ тенӗ/ усӑ курнӑ. Нартукан юррисем тесе Асавпуҫӗнче 50 ытла юрӑ ҫырса илнӗ.

*1. Ҫӳлӗ тӑвӑн тӑрринче*
*тилӗ юртать,*
*Ун урине хӑях касмаҫ-ши?*
*Турӑах та ҫырни, пӳлӗх*
*пӳрни*
*Пӗччен выртса ури*
*шӑнмаҫ-ши?*
*2. Сакмара та карӑм эп*
*саккӑрпа*
*Пӑхӑр улачасем тияма.*
*Пӑхӑр улачасем хут пулмӗҫ,*
*Ӑрӑскал пулсан пуҫсем*
*хур пулмӗҫ.*
*3. Асавпуҫ та ҫырми сиксе*
*юхать,*
*Сиксе юхсассӑн та*
*шуралмаҫ.*
*Асавпуҫӗнче ӳснӗ ача-пӑча*
*Ӑҫта ҫӳресен те хур*
*пулмаҫ.*
*4. Чӗнтӗрлӗ те кӗпер, ай, айӗнче*
*Чӗпеллӗ кӑвакалсен йӗрри пур.*
*Аттепеле аннен чӗрки ҫинче*
*Пӗчӗккӗрен пуснӑ йӗрсем пур.*
*5. Вун икӗ те тиртен кӗрӗк*
*ҫӗлетрӗм,*
*Сакӑр вунӑ пӗрме пӗртертӗм.*
*Аттепеле аннен пилне чикме*
*Ик айккине кӑсья хуртартӑм.*
*6. Ураҫҫисем ука, кумми пурҫӑн,*
*Камӑн алли виттӗр тухнӑ-ши?*
*Пӗвӗрсем те вӑрӑм, сӑнӑр чипер,*
*Камӑн арки ҫинче ӳснӗ-ши?*
*7. Лаша ҫине ларсан лаша лайӑх,*
*Ҫӗре анса утсан ҫӗр лайӑх.*
*Ӑҫта ҫӳресен те пӗр уйӑх-хӗвел,*
*Ҫуралса ӳснӗ ҫӗршыв, ҫав лайӑх.*
*8. Хура вӑрман виттӗр тухнӑ чуне*
*Ҫӗмӗрттӗрен хура ут кирлӗ.*
*Аттепеле аннен ҫуртне тытма*
*Ачаранах пухнӑ ӑс кирлӗ.*
*9. Икӗ кӑвак лаша тан юртаҫ,*
*Чӗн кутлӑхӗ тӑрӑх тар юхать.*
*Аяккӑри тӑвансем аса килсен*
*Ик куҫран куҫҫуль тан юхать.*
*10. Пӗчӗккӗ лаша, турӑ лаша*
*Чӑмӑртанса юртса ҫул илет.*
*Ай-хаях та пуҫӑм, ҫамрӑк чунӑм,*
*Пурӑна та киле ӑс илет.*
*11. Турӑах та лаша, кӑтра ҫилхе,*
*Ҫул тупаймассӑран хӑратӑп.*
*Ай-хӑях та пуҫӑм, ҫамрӑк чунӑм,*
*Кун кураймассӑран хӑратӑп.*
*12. Аяккӑран килет турӑ лаша,*
*Курмастӑр-им, ҫийӗсем пасарнӑ?*
*Аван-и те сывӑ-и тек тияттӑр,*
*Курмастӑр-им, сӑнӑм шурӑхнӑ?*
*13. Утланнӑ та утсем тек такӑнаҫ,*
*Те таканӗ хӑпнӑ, те мӗскер.*
*Ӑҫта ҫӳресен те ҫулсем ӑнмаҫ,*
*Те ӑрӑскал пӗтнӗ, те мӗскер.*
*14. Хура лаша юртать яр-яр пусса,*
*Ешӗл курӑк тӗпӗсене хускатса.*
*Курас килсен, тӑвансем,*
*тухса пӑхма*
*Хура пӗлӗт тӑрать хупласа.*
*15. Хура вӑрман виттӗр тухнӑ чуне*
*Хурӑн ҫулҫи ӳкрӗ пит ҫине.*
*Пурӑнамах тесе пурӑннӑ чух*
*Йывӑр хуйхӑ ӳкрӗ пуҫ ҫине.*
*16. Вырӑсла та хапхан тӑрри ҫук,*
*Ҫумӑр ҫусан тӑма вырӑн ҫук.*
*Чит ҫӗрсене эпӗ пӗр-пӗччен пуҫ,*
*Ларса калаҫмашкӑн никам ҫук.*
*17. Ҫӳлӗ тусем ҫинче ҫӳлӗ кӗлет,*
*Сӑнчӑр ярса сӑнчӑр ҫитес ҫук.*
*Пирӗнех те тӑвансем пит аякра,*
*Ҫыру ярса ҫыру ҫитес ҫук.*
*18. Хурама та пӗкӗ, ай, йӗс ункӑ*
*Ҫурма ҫула ҫитсен хуҫӑлчӗ.*
*Ай-хӑях та пуҫӑм, ҫамрӑк чунӑм,*
*Ҫын ҫуррине ҫитсен хур курчӗ.*
*19. Асавпуҫ та урамӗ тӳрӗ урам*
*Настӑрукпа туртса тухнӑ пек.*
*Асавпуҫӗнче ӳснӗ ача-пӑча*
*Стан ҫинче шӑратнӑ ҫурта пек.*
*20. Кӗтӳрен те килет хура ӗне,*
*Сӗтне суса илсе турӑх ту.*
*Аннеҫӗмех тетӗп, ай аннеҫӗм,*
*Ик кӑкӑру вӑйне пехил ту.*
*21. Пасартан та илнӗ ҫӗнӗ ҫуна,*
*Хӑш ӳречи ҫине эп ларам?*
*Аттеҫӗмех тетӗп, ай аннеҫӗм,*
*Хӑш урӑртан тытса пуҫ ҫапам?*
*22. Ишет-ӗҫке пӑлан, ишет-ӗҫке*
*Мӑйракине шывран илмесӗр.*
*Ир те кӗтрӗм, тӑванӑм, каҫ та*
*кӗтрӗм*
*Чӳречерен куҫа илмесӗр.*
*23. Чӗнтӗрлӗ те кӗпер айӗнче*
*Чӗмпӗр хӗрсем кӗрпе ҫӑваҫҫӗ.*
*Кӗрписене пӑхрӑм — вир кӗрпи,*
*Хӗрӗсене пӑхрӑм — пан улми.*
*24. Кӑвакалӗ кӑвак, мӑйӗ ула,*
*Куракансем тулӑ сапӗҫ-ха.*
*Пирӗнех те тӑвансем пит аякра,*
*Куракансем салам калӗҫ-ха.*
*25. И паринччӗ турӑ, и паринччӗ,*
*Карта тулли вылӑх паринччӗ.*
*Карта тулли вылӑха пӑхма*
*Ҫамрӑк пуҫӑма сывлӑх паринччӗ.*
*26. Асавпуҫ та ҫырми хӗрлӗ тӑпра,*
*Тусан кӗмӗл ҫӗрӗ пулмӗ-ши?*
*Асавпуҫ та ачи сарӑ ача,*
*Тусан ҫумри юлташ пулмӗ-ши?*
*27. Хура вӑрман виттӗр тухнӑ чуне*
*Хурамасем юлчӗҫ тайӑлса.*
*Ял-ял виттӗр тухнӑ чуне*
*Сарӑ хӗрсем юлчӗҫ куҫ хӗссе.*
*28. Икӗ карта хура чӗкеҫ,*
*Сар арчари хачӑ унки пек.*
*Турӑах та ҫырни, пӳлӗх пӳрни*
*Сантал мӑкӑнь ҫеҫки тӑрри пек.*
*29. Асавпуҫ те ҫырми*
*кукри-макри,*
*Кукри-макрисерен хурлӑхан.*
*Хурлӑхансем ҫисе хуралма,*
*Ҫын сӑмахне илтсе хурланма.*
*30. Анкартисем хыҫӗнчи пусӑва*
*Таптаймӗҫ-ха ямшӑкӑн лашисем.*
*Тӑшман тӑххӑр, эп пӗр-пӗччен,*
*Ҫияймӗҫ-ха турӑ хушмасан.*

**В. ЦВЕТКОВ. Асавпуҫ ялӗ.**